Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

1932 çулхи
июлĕн 27-мĕшĕнче
тухма пуçланă

58 (9501) № ✵ 2008 çулхи майăн (çу уйăхĕн) 28-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

Юлашки шăнкăрав

## ПĔРИСЕМШĔН – КАНИКУЛ, ТЕПРИСЕМШĔН – ÇĔНĔ ПУРНĂÇ

***«Электрик пуласшăн», – ĕмĕтне пытармасть Апаш шкулне вĕренсе пĕтерекен Коля Кузьмин. Унпа тантăш Коля Викторов вара ăçта каясси пирки уçăмлах палăртман пулин те унăн амăшĕпе аппăшĕ пĕлтернĕ тăрăх, вăл «пуç чиксе ларса ĕçлемелли ан пултăр» тесе калать-мĕн. Вĕсемпе эпир кашни çын пурнăçĕнче тенĕ пек пулса иртнĕ е иртекен хумханулă самантра, юлашки шăнкăрав янăранă кун, калаçрăмăр. 11-мĕш пĕтерекенсем кăçал районĕпе 535 хĕрпе каччă. Юлашки шăнкăравра эпир Апашра пултăмăр.***

«Сыв пуллашма та шел», – терĕ вун пĕрмĕшне пĕтерекен çичĕ хĕрпе çичĕ каччă пирки Апаш шкул директорĕ Ю.В.Смородинов. Чăн та, çаплах ĕнтĕ. Пĕри тепринчен маттур яшкĕрĕм пулни вĕсен вĕренӳри тата спортри çитĕнĕвĕнчен аван курăнать. Наташа Николаева француз чĕлхипе районти олимпиадăра 2-мĕш вырăн йышăннă, Алеша Игнатьев – информатикăпа вичçĕмĕш. Кунта эпир хăшне-пĕрне çеç асăнтăмăр. 11 çул хушшинче кашниех тĕрлĕ енпе сахал мар çитĕнӳ тунă. Тен, пурте район е республика шайĕнче мар-тăр, çапах вĕсен тăрăшулăхĕ куç кĕрет.

Юлашки шăнкăрава халалланă савăнăçлă уява (майăн 25-мĕшĕ вырсарни куна лекнĕ май ăна пур шкулта та шăмат кун, майăн 24-мĕшĕнче, ирттерчĕç) ашшĕ-амăшĕ килсе çитнĕ. Ырă сунса саламлакансен шутĕнче район пуçлăхĕ А.П. Князев хăй пулчĕ. Вăл саламланипе пĕрлех епле вĕренӳ заведенийĕ, мĕнле професси суйласа илсен аванраххи пирки те канаш пачĕ. Тĕрлĕ шайра тĕрлĕ енпе палăрнă учительсемпе шкул ачисене (ун пеккисемпе Апашсем яланах мухтанаççĕ) Анатолий Пантелеймонович Хисеп грамотисемпе чысларĕ. Тата, паллах, вырăнти ертӳçĕсем: ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А.Григорьев, Ленин ячĕллĕ хуçалăх представителĕ Т.Г.Ерлакова та шкул çунатти айĕнчен тухса каякансене ырă сунчĕç. Вун пĕрмĕшсен класс ертӳçи С.Б.Троицкий хăй те хумханни (тепĕр хĕрпе каччăран ытларах та пек туйăнчĕ мана) сисĕнчĕ. «Йывăр самант пулсан, канашламалли-сăмахламалли тупăнсан, килĕр, эпир сирĕнпе тĕл пулма яланах хавас», – чунтан каларĕ Святослав Борисович вун пĕрмĕшсене. Ачасем вара учительсемпе шкулти пур ĕçчене те уйрăмшар тав турĕç.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*Темиçе минутран – юлашки шăнкăрав.*

Юлашки шăнкăрава пама вун пĕрмĕшсенчен Игорь Кириллов, пĕрремĕшсенчен Светлана Малозейкина тивĕçнĕ. Пĕрисемшĕн вăл ачалăхпа сыв пуллашнине пĕлтерсе янăрарĕ пулсан, теприсемшĕн – шкулти пĕрремĕш каникул палли евĕр.

В.ЭВЕРККИ.

## УЛĂП ТĂПРИСЕМ ИНТЕРЕСЛЕНТЕРЕÇÇĔ

«Эй, çӳлти Турă! Эй, çӳлти Пӳлĕхçĕм! Апаш халăхне пысăк ĕç пуçлама вăй-хăват парсамăрччĕ. Эпир сире асăнатпăр, эсир пире ан асăнăр. Пĕтĕм Апаш çыннисене, пур-пур халăхăмăра чир-чĕртен, вут-кăвартан, пысăк шыв юхăмĕнчен сыхласа, упраса усрасамăрччĕ...» – «Апаш» декорацие скульптура композицийĕ умне çак сăмахсене калама пухăннă чăваш тумлисемпе тĕп хулари килнĕ хăнасене иртсе каякан машинăсем те кăшкăртса хăварчĕç. Тунти кун çапла çӳлти тата çĕрти Турăсене пуç çапнинчен пуçланчĕ те Апаш вулавĕ.

Майăн 26-мĕшĕ пирĕн районшăн паллă кун. Пĕтĕм тĕнчипе паллă Апаш культурине пĕлесси çак тăрăхран пуçланса кайнине халалласа 5 çул каялла кунта паллă декораципе скульптура композицийĕ лартрĕç. Çавăнтан вара çулсерен ирттерекен тĕпчев ĕçĕсемлĕ Апаш вулавне Шупашкарти ЧПУ студенчĕсемпе пĕрлех Апашри шкул ачисем те хутшăнма пуçларĕç. Вулавăн иккĕмĕш пайĕ кăçал та Апашри клуб-музейре иртрĕ. Уява ĕлĕкхи йăлана тĕпе хурса Çĕньялти, Шорккари, Апашри фольклор ушкăнĕсем уçрĕç. Ун хыççăн район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ М.Павлова уява малалла тăсса çак ĕçе пуçарса ярakansене тав турĕ. Нумайăшĕ çак кун тав çырăвĕсене тивĕçрĕç. Уявра ЧР Культура министерствин представителĕ С.Краснов, ЧППУ вĕрентекенĕ В.Станьял, педколледж директорĕ В.Сапожников, ентешлĕх председателĕ В.Кушников, П.Пупин скульптор тата ыттисем те курăнчĕç.

А.СУСМЕТ.



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

## 200 ГЕКТАР ЛАРТНĂ

Ял хуçалăх предприятийĕсем çĕр улмине тунти кун тĕлне 200 гектар çинче лартнă. Чи пысăк лаптăк Свердлов ячĕллĕ колхозра, унта вăл – 80 гектар. «Туруновский» тата «Атăл» хуçалăхсен иккĕмĕш çăкăр» – 35-шер гектар çинче.

В.ТИТОВА.

## ÇАМРĂК АРМЕЕЦСЕМ ПУХĂНЧĔÇ

***Районти «Зарницăпа» «Орленок» çарпа спорт вăййисен финалти 40-мĕш ăмăртăвĕсем паян 10 сехетре уçăлчĕç.***

Янăш ял тăрăхне ĕнерех нумай шкулран командăсем çитсе вырнаçнă. Пĕлтĕр «зарничниксенчен» Чăрăшкассисем, Çатра-Лапсарсем, Янăшсем маттур пулчĕç, «Орленокра» лицей, Атайкасси, Ишек палăрчĕç. Кăçал хăш команда мала тухĕ? Çакă ыран каçхине 7 сехетре паллă пулĕ. Унччен вара икĕ кунра çамрăк армеецсен хăйсем вăйлăрах, тавçăрулăрах пулнине кăтартмалла.

А.АЛИНИНА.

## ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМСЕМ – ПОГРАНИЧНИКСЕМ!

***Сире пурне те Пограничниксен кунĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Эсир, Çĕршывăн чăн-чăн хӳтĕлевçисем, шăрăха е сивĕ çанталăка пăхмасăр Тăван çĕршыва куç шăрçине упранă пек тăшманран сыхлатăр. Пирĕн çутă куншăн, канлĕ пурнăçшăн çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмастăр. Çĕршывăн ăнăçлă пурнăçĕ пĕр тикĕс аталаннинче сирĕн те пысăк тӳпе пур.***

***Тавах сире пурне те, чăтăмлăхпа паттăрлăхшăн, тăван республика, район ятне яманшăн. Сирĕнте яланах шанăç пулнине пĕлсе тăратăп.***

***Уяв ячĕпе пурне те çирĕн сывлăх, хавас кăмăл, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, вĕренӳре е кулленхи ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ,
Шупашкар район пуçлăхĕ.

## ВĔРЕНТӲ УПРАВЛЕНИЙĔНЧЕ – ÇĔНĔ ПУÇЛĂХ

***Конкурс ирттернĕ хыççăн тата район пуçлăхĕн майăн 20-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе районти вĕрентӳ управленийĕн начальникĕн лавне А.К.Смирнов туртма пуçларĕ.***

Александр Константинович хамăр район çынниех, Çĕньял-Покровски тăрăхĕнчен. 1991 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухсан Çĕньял-Покровски шкулĕнче информатикăпа физика учителĕ пулса тăрăшать. 1994 çулта вăл республикăри вĕрентӳ институтне, информаци технологийĕсен кафедрине куçать. 2006 çултан А.Смирнов ЧР Вĕрентӳ министерствинче пĕтĕмĕшле вĕрентӳ пайĕнче тĕп специалист-эксперт должноçĕнче ĕçленĕ.

Александр Константиновича çăмăл мар, çапах пархатарлă ĕçе ăнăçлă тытса пыма сывлăх сунатпăр.

А.АРДАЛИОНОВА.

## ВИÇÇĔМĔШ ПРЕМИ

Ватă çынсемпе инвалидсен Кӳкеçри çуртĕнче пурăнакан Алексей Альфонс художник пĕтĕм тĕнчери «Филантроп» премие тивĕçлĕ пулассишĕн Мускава 5 ӳкерчĕк ярса панă. Жюри ăна виççĕмĕш преми пама йышăннă. 71 çулти пенсионер инвалид пулсан та премии илме Мускавах çитеслĕн. Куллен сивĕ шывпа сапăнать, урисем хăйне итлесшĕн мар пулин те кашни кун 4-5 çухрăм утать. Жюри председателĕ – Иосиф Кобзон юрăç. Пĕлтĕр премин пĕтĕм фончĕ 1,5 мĕльон тенкĕрен тăнă.

Ю.ЮМАН.

Çырăнтару – 2008

## ХАЛЬХИНЧЕ ХАКНЕ ЧАКАРМАÇÇĔ

Иккĕмĕш çур çула çырăнтарас вăхăт пĕр уйăх çеç юлать. Мĕнле ĕçлеме палăртать-ха çак тапхăрта почта? Яланхиллех, кашни кунах почтальонкăсем, почта уйрăмĕсем хаçат-журнал çырăнтараççĕ. Июнь пуçламăшне вара, 2 – 9-мĕшсене, активлă эрне палăртнă. Çыхăну уйрăмĕсенче викторинăсем, лотерейсем йĕркелет, музыкăсене чĕнет.

Унтан пĕлтернĕ тăрăх, шел пулин те, кăçал çырăнтару хакне чакармасть, капла та пĕчĕккĕ тет. Пĕлтĕр ку тĕлĕшпе почтăпа редакци пĕрле вулакана аванах парне кӳнĕччĕ.

Анчах пирĕн хисеплĕ вулаканшăн çакă чăрмав пулмĕ тетпĕр. Пĕлетпĕр-çке, почта ĕçченĕсем хăйсем те 5-6 çул каялла кĕрсе ӳкнĕ йывăрлăхран халь те тухса пĕтеймеççĕ, почтальонкăсем укçине çити-çитми çеç илеççĕ. Редакци вара, хаçат кăларнинчен нихçан та тупăш илмен, ун пек тĕллев те лартман.

Çавăнпа хакне пăхса ан тăрăр, тытăр та çырăнăр, ырă çынсем, хальхи укçа шайĕпе унран пĕчĕкки ним те çук. Вăхăчĕ вара, пĕр уйăх, сисĕнмесĕрех иртсе кайма пултарать.

РЕДАКЦИ.

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

| | |
|---|---|
| ***Юн кун, майăн 28-мĕшĕ*** — улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, кăнтăрла **+17**, çĕрле **+8** | ***Эрне кун, майăн 30-мĕшĕ*** — пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах çумăр çăвать, кăнтăрла **+17**, çĕрле **+7** |
| ***Кĕçнерни кун, майăн 29-мĕшĕ*** — çумăр çăвать, кăнтăрла **+12**, çĕрле **+8** | ***Шăмат кун, майăн 31-мĕшĕ*** — уяр, кăнтăрла **+17**, çĕрле **+4** |

Право

# САККУНСЕМПЕ КИЛӖШӲЛЛӖН...

***Раҫҫей Президенчӗн апрелӗн 21-мӗшӗнчи указӗпе район сучӗн председателӗ пулма С.А.ГУБАРЕВАНА ҫирӗплетнӗ. Ҫӗнӗ ӗҫ вырӑнӗнче вӑл хӑйӗн умне мӗнле тӗллевсем лартать-ха?***



Фото ӳкерчӗкӗ авторӑн.

*С.А.Губарева.*

– Хальхи вӑхӑтри судсем гражданлӑ общество тӑвас тата ҫӗршыв экономикине аталантарас ӗҫре пысӑк пӗлтерӗшлӗ вырӑн йышӑнаҫҫӗ, – **терӗ Светлана Алексеевна.** – Паянхи пурнӑҫ судсене малалла аталанма, хӑйсен умне ҫӗнӗ тӗллевсем лартма хистет. Пирӗн задачӑсенчен пӗри – суд влаҫӗн авторитетне ӳстересси, халӑх шанӑҫне тӳрре кӑларасси. Ҫакӑнпа пӗрлех судсен алӑкӗсем халӑхшӑн яланах уҫӑ пулччӑр, судран ҫынсем тивӗҫлӗ информаци илме пултарччӑр. Суд ӗҫ-хӗлӗ тата вӗсене пырса тивекен информаци технологийӗсем енӗпе Раҫҫей тӗнче стандарчӗсемпе танлашма тӑрӑшать.

***– Район сучӗн кӑҫалхи ӗҫ-хӗлӗ ҫинчен мӗн калама пултаратӑр?***

– Пӗрремӗш кварталта вӑл 50 уголовлӑ ӗҫ пӑхса 64 ҫынна, вӗсенчен 3-шне ҫын вӗлернӗшӗн, 30-шне уйрӑм ҫын япалине е тӗрлӗ харпӑрлӑхри пурлӑха вӑрланӑшӑн, айӑпланӑ. Суд тӳрре кӑларнӑ тӗслӗх пулман, 5 ҫын тӗлӗшпе пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫсене реабилитаци тума май паман сӑлтавсене пула суд чарса лартнӑ.

***– Пӗрремӗш кварталта миҫе ҫынна ирӗклӗх прависӗр хӑварма йышӑннӑ?***

– 30 ҫынна. Преступлени тунӑ пулсан суд тивӗҫлипе явап тыттарать. Право йӗркине пӑхӑнман ҫынсен ҫакна лайӑх пӗлсе тӑмалла.

***– Саккуна пӑсса алкоголь продукцийӗ тӑвакансене, упракансене тата сутакансене хирӗҫ пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫсем кӑҫал ышлӑ-и?***

– Пӗрремӗш кварталта 9 пӑхнӑ, айӑплисене 5-шер пин тенкӗ таран штраф тӳлеттерме йышӑннӑ. Район прокуратури ҫакнашкал ӗҫсене суда ҫитерсех тӑрать, ҫавӑнпа вӗсен йышӗ пӗлтӗрхинчен сахал пулмалла мар.

***– Сирӗн судьясен сӗтелӗсем ҫинче хальхи вӑхӑтра гражданла ӗҫсем нумай-и?***

– Асӑннӑ хушӑра район судйисем гражданла 161 ӗҫ, уголовлӑ ӗҫсенчен 3 хут ытларах, тишкерсе тӗрлӗ йышӑну кӑларнӑ. Вӗсен хушшинче ӗҫе каялла вырнаҫтарнӑ, этем чысӗпе тивӗҫне хӳтӗленӗ тӗслӗхсем те пур. Раҫҫей Федерацийӗн административлӑ право йӗркине пӑсни ҫинчен калакан кодекспа килӗшӳллӗн 13 ӗҫ пӑхнӑ. Уйрӑммӑн илсен, автоаварисенче шар кӑтартнӑшӑн – пурлӑха тата сывлӑха тӑкак кӳнӗшӗн – айӑплисенчен укҫа шыраса илме йышӑннӑ. Гражданла ӗҫсен хисепӗ пӗлтӗрхинчен кая пулмӗ, мӗншӗн тесен ҫынсем тавлашуллӑ ыйтусене суд урлӑ татса памаллине лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Юлашкинчен ҫакна калас килет: район сучӗ хӑйӗн ӗҫне ӳлӗм те Раҫҫей саккунӗсемпе килӗштерсе туса пырӗ, халӑх интересӗсене хӳтӗлеме тӑрӑшӗ.

Ю.МИХАЙЛОВ
калаҫнӑ.

## ЧЕРЕТРЕ – ҪУЛ

Вӑрман-Ҫӗктер тӑрӑхӗнчи ветерансен ертӳҫи М.А.Изванова пуҫарнипе темиҫе ҫул каялла Кайри Ункӑпуҫӗнчи клуба ветерансем йӗркене кӗртнӗ те уявсем ирттерме тытӑннӑ. Савӑннӑ ял ҫыннисем! Ара, пухӑнмалли пур-ҫке. Ҫвечӗ ҫукки те пӑшӑрхантармасть вӗсене.

Яла шыв кӗртессишӗн нумай чупнӑ М.А.Изванова. Вӑрман-Ҫӗктер ял тӑрӑхӗн администрацийӗ тӑрӑшнипе нумаях пулмасть урамсене пӑрӑх хурса тухнӑ, колонкӑсем вырнаҫтарнӑ, шыв панӑ. Халӗ ҫынсем яла асфальт ҫул кӗрессе кӗтеҫҫӗ.

С.СЕРЕГИН.

## ҪӖННИПЕ КӐСӐКЛАННӐ

Шорккари ветерансен ҫурчӗн заведующийӗ О.Н. Дмитриева ялти культура ӗҫченӗсемпе пӗрле иртнӗ уйӑхсенче Кӑшавӑшра, Янӑшра тата Ишекре пулса курнӑ, ветерансен ҫурчӗсенче пурӑнакансене Шорккари ветерансен пурнӑҫӗ ҫинчен каласа панӑ, кӳршӗсен ӗҫ-хӗлӗпе, ҫӗнӗлӗхӗпе паллашнӑ, концерт кӑтартнӑ, парнесем панӑ.

Ю.СЕРГЕЕВ.

Ыйту - хурав

## ПУЯН ПУРНӐҪ

***Эпӗ шкулта вӗреннӗ чухне учительсем Емельян Николаев ҫинчен каласа панине астӑватӑп. Кам пулнӑ вӑл?***

В.СЕМЕНОВ,
ПӗчӗкАначкасси.

Емельян Николаевич Николаев 1901 ҫулхи январӗн 21-мӗшӗнче Пӗчӗк Аначкассинче ҫуралнӑ. Алькешпе Иккасси шкулӗсенче вӗреннӗ. 1918 ҫулта Шупашкар хулин милицийӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ, 1919 ҫулта Мускаври Шалти Ӗҫсен Комиссариачӗн курсӗнче вӗренет, унтан таврӑнсан Шупашкар уесӗн милицийӗн пуҫлӑхӗнче вӑй хурать, 1919-1924 ҫулсенче Хӗрлӗ Ҫарта службӑра пулать, Врангеле хирӗҫ ҫапӑҫать. Республикӑна таврӑнсан партипе совет органӗсенче тӑрӑшать: партин Чӑваш обкомӗн инструкторӗ, партин Тутаркасси тата Елчӗк райкомӗсен секретарӗ, Чӑваш АССРӗн ҫӗрӗҫ халӑх комиссарӗн ҫумӗ, Чӑвашпотребсоюз председателӗн ҫумӗ пулнӑ. 1977 ҫулта ҫӗре кӗнӗ. Хӑйӗн пурнӑҫӗпе ӗҫ-хӗлӗ ҫинчен «Памятные годы» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ.

А.МОКИН журналист хуравланӑ.

# ҪИЧӖ АЧА, ПУРНЕ ТЕ ВӖРЕНТНӖ

***Мерешпуҫӗнчи Михала Микулайӗ Микула Лисукӗпе 1908 ҫулта пӗрлешнӗ. Вара вӗсен 1909 ҫулта Мишша, 1919 ҫулта Ҫеруш, 1924 ҫулта Васҫа ҫуралать. «Висӗ ывӑл ӳссе ҫитсен, тӑвата кӗтесе ларӑпӑр, ларӑпӑр та касӑпӑр. Пура туса хурӑпӑр та пысӑк пӳртех лартӑпӑр», – ашшӗ висӗ чӳречеллӗ пӗчӗк пӳртре ҫапла ӗмӗтленсе мӑшӑрӗпе савӑнса пурӑнать. Анчах та ашшӗн ӗмӗчӗ ҫитеймест, хӑйӗн пӑхаттирӗсемпе пӗр кӗтессе те лараймасть. Питӗ йывӑр чирлесе ывӑлӗсенчен ӗмӗрлӗхех уйрӑлать. Мӑшӑрӗн вара висӗ ывӑла пӗччен пӑхса ҫитӗнтерме тивет. Ывӑлӗсем ӗҫлеме пуҫланӑ ҫӗре 1941 ҫулта вӑрҫӑ та пуҫланать. Лисукӑн висӗ ывӑлне те вӑрҫа илсе каяҫҫӗ. Вара амӑшӗ тӑр пӗчченех тӑрса юлать.***

1942 ҫулхи майӑн 30-мӗшӗнче Ҫеруш, 31-мӗшӗнче Мишша вӑрҫӑра паттӑрсен вилӗмӗпе вилеҫҫӗ. Амӑшӗ пӗр кунах икӗ ывӑл вилнӗ хутне илсен чирлесех каять. Аран-аран сывалса 1944 ҫулхи кӗркунне вилӗмрен юлнӑ юлашки ывӑлне Васҫана кӗтсе илет. Ывӑлне, нумай ҫӗртен аманнӑскере, фронта юрӑхсӑр тесе киле яраҫҫӗ. Вӑл килнӗ куна эпӗ паянхи пекех ас тӑватӑп. Ун чухне пирӗн ялтан фронта валли ҫӗр улми пама Шупашкара, чукун ҫул станцине, лашасемпе ҫӳренӗ. Каялла килме тухсан станцинче Васҫана лартса килеҫҫӗ. Ҫӗр улми эпир ял хӗррипчи уйра кӑларттӑмӑрччӗ. Пирӗн тӗле ҫитсен Микула Хӗлипӗ лашине тӑратрӗ те, урапа ҫинчен Васҫа костыльсемпе туялanса анчӗ. Пӗтӗм ял халӑхӗ курма пуҫтарӑнчӗ. Хӗрарӑмсем кашниех Васҫаран: «Манӑн упӑшкана, манӑн ывӑла вӑрҫӑра курмарӑн-и?» – тесе ыйтма тытӑнчӗҫ. Васҫа аран утнине курса нумайӑшӗн куҫӗ шывланчӗ.

Ҫапла аманса таврӑннӑ Лисукӑн юлашки ывӑлӗ Василий Николаевич. Ҫулталӑкран вӑл сывалса хӑрах туяпах утма пуҫларӗ те колхозра бухгалтер вырӑнӗнче ӗҫлеме тытӑнчӗ. Вӑрҫӑччен вӑл 10 класс пӗтернӗ. Шкулта математикӑпа физикӑна уйрӑмах юратса вӗреннӗ. Ҫавӑнпа та пулӗ вӑл бухгалтер ӗҫне кӗске вӑхӑтрах ӑнланса тӗрӗс ӗҫленӗ. Аманнӑ сурансем хуллен тӳрленсе пынӑ. Анчах та ӑна ӳпкинчи мина ванчӑкӗ канӑҫ паман. Вӑл вӑхӑтра ӳпкене операци тума хӑрanӑ та пулмалла...

1946 ҫулта вара вӑл Чӑрӑшкассинчи Раиса Федоровнапа пӗрлешет, ултӑ ывӑлпа пӗр хӗр ҫуратса ҫитӗнтерчӗҫ. Анчах та Василий Николаевич суранӗсене пула 1978 ҫулта чирлесе вилет.

Ҫичӗ ачана пурне те вӗрентсе тӳрӗ ҫул ҫине кӑларма йывӑр пулнӑ ӗнтӗ пӗччен хӗрарӑма. Малтанах ҫиччӗшӗ те 10 класс пӗтерчӗҫ. Амӑшӗ вӗсене пурне те пӗчӗккӗллех ӗҫе хӑнӑхтарнӑ. Колхозра кашни ачи ячӗпех пай илетчӗ. Мӗн тӑвӑн, пурӑнмаллах пулнӑ вӗтха. Ашшӗ ҫук пулин те тар кӑларса ӗҫлесех, пысӑк кермен пек, пилӗк стеналлӑ пӳрт лартса аслашшӗн ӗмӗтне пурнӑҫларӗҫ. Аслӑ ывӑлӗ Геннадий шкултан 10 класс пӗтерсе тухсан Совет ҫарне кайрӗ. Тинӗс флотӗнче вӑл шыв айӗнче ҫӳрекен кимӗ ҫинче пулать. Хӑй каланӑ тӑрӑх, вӗсем Америка ҫыранӗсем патӗнче те, Кубӑра та пулнӑ. Кубӑра асӑнмалӑх ӑна сахӑр тростникне касмалли ҫӗҫӗ парнелеҫҫӗ. Вӑл ӑна килнех илсе килнӗччӗ. Флот хыҫҫӑн Геннадий Васильевич химзаводра ӗҫлерӗ. 1992 ҫулта заводра ӗҫленӗ чухнех пусма ҫинчен ӳксе вилет.

Унӑн 3 шӑллӗ те университет пӗтерсе тӗрлӗ ҫӗрте ӗҫлеме пуҫлаҫҫӗ. Михаил Васильевич химзаводра инженерта ӗҫлесе пенсие тухать. Николай Васильевич ют патшалӑхсемпе суту-илӳ тӑвакан карапсем ҫинче ҫыхӑну енӗпе ӗҫлет. Халӗ Мускавра пурӑнать. Вениамин Васильевич кайӑк-кӗшӗк фабрикинче инженерта тӑрӑшатчӗ, халӗ Шӗнерпуҫ патӗнчи сысна комплексӗнче вӑй хурать. Виталий Васильевич яланах колхозра шофер пулса малти вырӑнта пынӑ. Галина Васильевна медицина сестри, чирлӗ амӑшне пӑхать.

Герман Васильевич вара ашшӗ пекех математикӑпа физикӑна юратса вӗреннӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Шупашкарти пединститутри физикӑпа математика факультетне вӗренсе пӗтерсе учитель пулса тухать. Шӗнерпуҫӗнчи шкулта директорта, нумай хушӑ Кӳкеҫри вӑтам шкулта ӗҫлет. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Раҫҫейре учительсен хушшинчи конкурсра та малти вырӑна тухса патшалӑх премине илме тивӗҫет. Ҫакӑн пек пултаруллӑ аслӑ учителе курса ӑна районти вӗрентӳ управленийӗн начальникӗ пулма шанаҫҫӗ. Герман Васильевич ҫак лава мӗн пултарнӑ таран пӗтӗм вӑйне хурса туртать. Вӑл хӑйӗн ӗҫӗнче анчах мар, килӗнче те тӑрӑшуллӑ ашшӗ пулнӑ, ҫавна кура ӗнтӗ унӑн ачисем те аслӑ пӗлӳ илсе тухрӗҫ. Ялта вӑл пыл хурчӗ те ӗрчететчӗ, пахчаҫӑ та пулнӑ, иҫӗм йывӑҫҫи ӳстернӗ. Ҫынна ҫын пулма пӗлнӗ, хӑйсен пиччӗшӗсемпе питӗ туслӑ пурӑнса пӗр-пӗрне пулӑшса пыратчӗҫ. Шел, ытла та ир вӑл хӑйӗн куҫне хупрӗ. Пирӗншӗн, ял ҫыннисемшӗн, тӑванӗсемшӗн, районти учительсемпе вӗренекенсемшӗн Герман Васильевич, ашшӗ пекех, ӗмӗр-ӗмӗрех ырӑ тӗслӗх пулса юлчӗ.

Ю.КИРИЛЛОВ, Мерешпуҫ ялӗ.

## ДИЛЕРСЕМПЕ ӖҪЛЕТ

Ятне каланинчен ытла реклама кирлӗ мар-тӑр **Ишлейри пысӑк вольтлӑ аппаратура заводне.** Электрощит оборудованийӗ кӑларакан чи пысӑк предприятисенчен пӗри вӑл республикӑра, Раҫҫейре. Халӗ вӑл хӑйӗн продукцине сарас тӗлӗшпе сеть йӗркелет. Ҫак уйӑхӑн 20-22-мӗшӗсенче завод хӑй патӗнче дилер представительствисем валли семинар ирттернӗ.

Мероприятие дилерсемпе пӗрлех тӗнчери пысӑк кампанисен: «Schneider», «Elektric», «Simens», «ABB» – представителӗсем те хутшӑннӑ. Вӗсемпе ИЗВА туслӑ ҫыхӑну тытать. Семинар вӑхӑтӗнче дилерсемпе хӑнасем цехсенче пулса курнӑ, ӗҫ-хӗлпе паллашнӑ, малашлӑх плансене сӳтсе явнӑ. Заводӑн ҫӗнӗ разработкисемпе паллашнӑ.

Завод хӑйӗн дилерӗсен сетьне тата аталантарасшӑн, мӗншӗн тесен ҫакӑ Раҫҫей тата тӗнче рынокӗнчи позицие ҫирӗплетме ҫеҫ мар, тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнма пулӑшать.

В.АВЕРКИЕВА.

## КАЙӐКСЕМ ЫТЛАРАХ ВӖҪСЕ КИЛЕҪҪӖ, КАЯКАНСЕМ ТЕ САХАЛ МАР

Майӑн 16-мӗшӗ тӗлне районта 224 ача, пӗлтӗрхи ҫак тапхӑртинчен 16 нумайрах, ҫуралнӑ. Иртнӗ ҫулсенчипе танлаштарсан, кайӑксем ытларах вӗҫсе килеҫҫӗ пулсан та, вилекенсем ҫав-ҫавах нумайрах-ха.

## ӲКЕРЧӖКСЕМ КӐТАРТНӐ

Майӑн 14-мӗшӗнче район халӑхне социаллӑ пулӑшу паракан центрта «Пирӗн туслӑ ҫемье» ятпа ӳкерчӗксен выставки иртнӗ, ӑна Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунне халалланӑ, унта шкул ачисем хутшӑннӑ, ҫӗнтерӳҫӗсене парнесем парса хавхалантарнӑ.

## ЭКЗАМЕН ТЫТАҪҪӖ

Кӳкеҫри 1-мӗш шкулта тракторист-машинист специальноҫне алла илме 30 ача экзамен тытать. Вӗсене ӑнӑҫлӑ тухсан руль умне ларма ирӗк параҫҫӗ. Шкулта ҫак ыйтупа Гостехнадзорӑн районти патшалӑх инспекцийӗн пуҫлӑхӗ В.Михайлов пулнӑ, экзаменсем тыттарнӑ чухне тимлӗрех пӑхмалли ыйтусем ҫинче чарӑнса тӑнӑ.

В.НИКОЛАЕВ.

## ҪУЛА ҪИРӖПЛЕТНӖ

Ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсем е уйрӑм ҫынсем пуҫарнипе вӑл е ку ялти урамсемпе тӑкӑрлӑксене ҫирӗплетни ҫинчен район хаҫачӗ пӗлтерсех тӑрать. Нумаях пулмасть Атайкассинчи Мускав урамне тӑршшӗпех строительство каяшӗ сарса тухнӑ. Иртнӗ шӑмат кун вара Йокшу тӑкӑрлӑкне хытарнӑ. Ҫак ӗҫсене пурнӑҫлама Атайкасси ял тӑрӑхӗн администрацине «Автодорремстрой» обществу пулӑшнӑ.

Ю.ЮМАН.



# ЙĔРКЕЛĔХ ХУРАЛĔНЧЕ



## АНОНИМЛĂ ЗАЯВЛЕНИСЕНЕ ÇЕÇ ПĂХСА ТУХМАÇÇĔ

***Йĕркене пăссан е кирек мĕнле саккуна хирĕçле ĕç тусан та йĕрке хуралçисенчен пулăшу ыйтатпăр. Çапла, Раççей саккунĕсемпе килĕшӳллĕн, шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чаçĕнче тĕрлĕ ыйтупа килнĕ çынсенчен заявлени йышăнаççĕ. Çак тата ытти ыйтусем пирки паянхи хăна, пай пуçлăхĕн çумĕ – штаб начальникĕ В.В.НИКОЛАЕВ милици подполковникĕ, ăнлантарса парать.***

– Учетпа регистраци дисциплинине çирĕплетес ыйтусене оперативлă канашлусенче пĕрмай пăхса тухатпăр. Акă, кăçал çеç шалти ĕçсен пай пуçлăхĕ патĕнче 3 хут отчет турăм. Иртнĕ çул 6617 заявлени йышăннă. Кăçалхи виçĕ уйăхра çак кăтарту 1550-па танлашать (пĕлтĕрхи кварталта – 1380).

***– Владислав Валерьевич, вĕсен малашнехи «кун-çулĕ» мĕнлерех?***

– 1550 заявленинчен 354-шĕ енĕпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Пирĕн пур енпе те йышăну кăларма ирĕк çук, çавна май 305-шне пăхса тухма прокуратурăна е суда янă. 371-ĕш тĕлĕшпе йĕркене пăсни çуккипе хирĕçленине палăртнă. Çак хирĕçленисенчен 51-шне прокурор çĕнĕрен тĕрĕслев ирттерме каялла тавăрса панă. Сăлтавĕ мĕнре-ха? Чи малтанах – исполнительсем тулли материал пухманнинче. Каялла килнĕ заявленисенчен 10-шпе çĕнĕрен тĕрĕслев ирттернĕ хыççăн уголовнăй ĕç пуçарнă. 122 заявленипе саккун урлă сиксе каçма хăтланакансене административлă правонарушенишĕн айăпланă.

***– Саккуна хирĕçле ĕç туни çинчен пĕлтерес тесен темле пулсан та йĕркепе дежурнăй чаçе пырса заявлени çырмалла-и? Сăмахран, пулăшу ыйтакан Тăрăнтан е Шăмăшран пулсан? Е урăхла майсем те пур? Тата вĕсене мĕн вăхăтра пăхса тухаççĕ?***

– Паллах, кунта килекенсенчен пуринчен те заявлени йышăнса юлмалла. Саккуна хирĕçле ĕç пирĕн район территорийĕнче пулса иртнĕ е çук – пĕрех пулăшу ыйтма килнĕ çынран йĕрке ыйтнă пек ăнлантарнине йышăнмалла. Шалти ĕçсен пайĕнче çеç мар, районти пур форма тăхăннă саккун хуралçин те (милици е суд, пушар хуралĕн е прокуратура сотрудникĕ...) инкек курнă çынран заявлени йышăнмалла, унтан пире пĕлтермелле. Çакна палăртса хăварасшăн, çырнă е сăмахпа каланă анонимлă заявленисене РФ Шалти ĕçсен министерствин 985-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн пăхмастпăр. Заявление йышăнсан йĕркепе 3 талăк хушшинче пăхса тухмалла, йышăну тусан РФ Уголовнăй кодексри 148-мĕш статьяри 4-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн 24 сехет хушшинче заявлени çыракана унăн ыйтăвне мĕнле пăхса тухнине пĕлтермелле. Сăмах май, шалти ĕçсен пайĕн çуртĕнче нормативлă документсен тĕслĕхĕсемпе заявлени çыраканăн кĕтесне йĕркеленĕ, унта веçех ăнлантарса çырнă.

***– Владислав Валерьевич, ял тăрăхĕсемпе пăхсан заявленисем ăçтан нумайрах килеççĕ-ха?***

– Виçĕ уйăхри кăтартупа пăхсан, Кӳкеçпе чи нумай заявлени регистрацилени курăнать. Çĕньял, Тутаркасси ял тăрăхĕсенчен те пулăшу ыйтакансем нумай.

А.СУСМЕТ.

## ТЫТСА ЧАРНĂ

Ишекри шкулпа культура çуртĕнчен паллă мар çын музыка аппаратчĕ тата компьютер вăрласа тухнине «Тăван Ен» маларах хыпарланăччĕ. Ĕнер вара редакцие районти шалти ĕçсен пайĕ çак преступлени тунă тесе шутлакан çынна пĕлтерчĕ. «Вăл – Раççей çарне хĕсмете Ишекрен кайнă В.Семучеев, – терĕ уголовнăй шырав уйрăмĕн ертӳçи С.Мартынов. – Хурасырмара çуралнă, чаçрен Ишеке тарса



Фото укерчĕкĕ авторăн.

тавăрннă, вăрлана-çаратнă, çакăн пекки 11 тĕслĕх палăртрăмăр. Семучеева ĕçне тăрă шыв çине кăларма уйрăм оперуполномоченнăйĕсем Е.Виноградовпа В.Абрамов хастар хутшăнчĕç. Семучеева патрульпе пост службин взвод командирĕ **В.Петров (фото ӳкерчĕкре)** тытса чарнă. Следстви ĕçне çар прокуратури тĕпчет. Халĕ каччă следстви изоляторĕнче, суд пуласса кĕтет».

В.НИКОЛАЕВ.

## ВЫЛЬĂХ МАСАРĔСЕМ ЙĔРКЕЛЛЕХ-И?

***Чăваш халăхĕ Çимĕкчен масарсене тирпейлет. «Çын пытармалли вырăн таса пулмалла», – тетпĕр пурте. Çакăнпа пĕрлех выльăх масарĕсене йĕркелессине те манар мар, унсăрăн вĕсенчен хăрушă чир-чĕр сарăлма пултарать.***

Пĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăрам-ха. 1936 тата 1940 çулсенче çĕнĕр язви выльăха мур пек шăлса кайнине астăвакансем пурăнаççĕ-ши, пурăнмаççĕ-ши Апаш тăрăхĕнче? Выльăх чир-чĕрĕпе кĕрешекен районти станцийĕн документĕнче тăрăх, асăннă çулсенче тата 1971 çулта Апашра çĕнĕр язвине пула вун-вун пуç выльăх вилни паллă. Вĕсене 1-мĕш выльăх масарне пытарнă, унăн лаптăкĕ 400 тăваткал метр. Тĕпчевçĕсем ăнлантарнă тăрăх, çĕнĕр язви – выльăха тата этеме ерекен уйрăмах хăрушă чир. Ăна пула вилнĕ выльăха пытарнă масарсем нумай çул хушши çĕнĕр язвине ертекен вырăнсем шутланаççĕ. Чир инфекцийĕ выльăха пытарнă вырăнта упранать, вил тăприне тыткаласанах этеме куçма пултарать. Район прокуратури çакна тĕпе хурса Апаш тăрăхĕнчи 1-мĕш выльăх масарне санитари тата ветеринари йĕркисене пăхăнтарас тĕллевпе 2007 çулхи июль уйăхĕнче ĕçе суда çитерчĕ. Райсуд ял тăрăхĕн администрацине выльăх масарне карта тытса çавăрма, шалти тавраш̆ĕпе çĕр чавса тухма хушса хăварчĕ. Халĕ çак ĕçсем пыраççĕ.

Район прокуратури ял тăрăхĕсенчи выльăх масарĕсене кăçал та тĕрĕслеме палăртнă. Ĕçе суда парасса кĕтмелле мар, выльăх масарĕсене санитари тата ветеринари правилисемпе йĕркелемелле.

А.МОИСЕЕВ, район прокурорĕ.

## АЧАШĂН ПИТ ХĔРЕЛЕТ

***Кăçалхи январь-апрель уйăхĕсенче район территорийĕнче çул çитмен ачасем 26 преступлени тунă (пĕлтĕрхи çав хушăра – 14), çул çитмен ачасем преступлени тăвасси 85,7 процент ӳснĕ. 26-ран 13-шне района ытти çĕртен килнисем тунă.***

Район администрацийĕн çул çитмен ачасен ĕçĕсемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕнче халĕ çул çитмен ачасене тивĕçлĕ воспитани парассишĕн тăрăшман 36 çемье тата çакнашкал çемьесен йышне лекме пултаракан 27 çемье учетра тăрать.

Комисси кăçалхи тăватă уйăхра йывăр çемьесенчи çул çитмен тăватă ачана ĕçе вырнаçтарма районти ĕçе вырнаçтаракан центра янă.

Уголовнăй кодекспа айăплама çул çитмен, обществăшăн хăрушă ĕç каллех ан туса хуччăр тесе 2 ачана ЧР Шалти ĕçсен министерствин çул çитмен ачасене вăхăтлăха тытса тăракан центрĕнче пурăнма вырнаçтарнă.

Иртнĕ тăватă уйăхра професси пĕлĕвĕ паракан техучилищĕсем комиссие пăхма 8 ача ĕçне çитернĕ, вĕсен ыйтăвне çапла татса панă: вăтам пĕлӳ илмесĕрех 2-шне училищĕрен кăларса яма ирĕк панă, 4-шне кăларса яма ирĕк паман, 2-шне тĕрĕслев тапхăрĕ витĕр тухма шанăç панă (ăна ăнăçлă тухсан вĕренĕве малалла тăсма ирĕк параççĕ).

Кăçалхи тăватă уйăхра административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан саккунпа килĕшӳллĕн çул çитмен ачасене право йĕркине пăснăшăн тата вĕсен ашшĕ-амăшне ачисене тивĕçлипе пăхманшăн 35650 тенкĕлĕх штраф панă, вĕсем 14050 тенкине тӳлесе татнă, тепĕр 9100 тенкĕ тӳлетерессишĕн суд приставĕсем яваплă, тепĕр 12500 тенкĕ тӳлеме, чăн та, штраф вăхăчĕ тухман, анчах тӳлеттереççех пулĕ.

Ю.МИХАЙЛОВ.

## КОМИССИ ЛАРĂВĔ

Майăн 15-мĕшĕнче райадминистраци çуменчи административлă комиссин черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Мăн Пӳкассинчи, Лапсарти, Вăрманкасри (Лапсар я/т), Хачăкри, Хурăнлăхри, Шорчекассинчи, Курак Чурачăкри, Ишлейри, Моççакассинчи уйрăм çын çурт-йĕрĕ умĕнче строительство материалĕ упранăшăн – Чăваш Республикин административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан саккунпе пăснăшăн – кил хуçисен пĕр пайне асăрхаттарса хăварчĕç, ял тăрăхĕсен территорийĕнче çурт-йĕр умĕнчи лаптăка стройматериалтан пушатма ыйтрĕç, тепĕр пайне 300-шер тенкĕ штраф пачĕç. Йыттине урама кăларса ярса сăмсалăхсăрах çӳретнĕшĕн Çатракасси (Сарапакасси я/т) çыннине 500 тенкĕ шраф тӳлеттерме йышăнчĕç.

С.СЕРЕГИН.

## ХЫТĂ ПĂЛХАННИПЕ

2007 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче, çĕрле, Шăмăш клубĕ умĕнче Çĕньялсемпе Шăмăшсем çапăçнă вăхăтра Шупашкар каччине çĕçĕпе чиксе вĕлерни çинчен хаçат пĕлтернĕччĕ. Çак уголовнăй ĕçе пăхма суда янă. Ăна тĕпченĕ следователь айăпланакан çын кĕтмен çĕртен хăйне кӳрентернипе самантрах хытă пăлханса кайнăран çамрăка çĕçĕпе чикнĕ тесе пĕтĕмлетнĕ. Уголовнăй кодексăн ку статйипе 3 çул таран ирĕклĕх прависĕр хăвараççĕ.

М.ЖУРАВЛЕВ,
Çĕнĕ Шупашкарти следстви пайĕн ертӳçи.

## АРЕСТЛЕНИНЕ САЛАТНĂШĂН

Суд приставĕ Кӳкеçри «ТПК «Приволжская» обществăн (директорĕ С.В.Чумаков) 1054 пин тенкĕлĕх пурлăхне арестленĕ, ăна упрама хăйнех шаннă, салатнăшăн айăплама пултарасси çинчен пĕлтернĕ. Анчах 2007 çулхи сентябрьте Чумаков арестленĕ пурлăхăн пĕр пайне сутма тата сутса тунă укçана участок пуçлăхне Е.В. Афанина ĕç укçи тӳлеме ярас тĕллевпе панă. Хăйĕн ĕçĕсемпе Чумаков Уголовнăй кодексăн 312-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступлени тунă тесе йышăннă миравай судья, ăна 3500 тенкĕлĕх штраф панă.

А.ИВАНОВ.

## МИЛИЦИ СВОДКИНЧЕН

Майăн 10-мĕшĕнче Кĕçĕн Турханти В.Н.Дмитриева (1966 ç.ç.) хытă хĕнесе пĕтернĕ, пурнăçне çăлма хулана илсе çитерсен вăл вилсе кайнă. Ленин ячĕллĕ хуçалăхăн Паçпакри фермине В.К.Алексеева (1960 ç.ç.) тӳнккесе илнĕ, алă çĕклекене явап тыттармах тивет. Ишлейри «Унга» обществăран строительствăра усă курмалли тимĕр 11730 тенкĕлĕх вăрласа тухнă, çаратакана шыратпăр. 2007 çулхи октябрьте Шăнкасри К.В.Ефимова килĕнчен 240 кг тырă пуçтарса кайнă, камсем пит тăрăшнине палăртрăмăр. Çак уйăхра «Прогресс» обществăн Тимой Мамăшри вите çуртĕнчи кăмака алăкĕ çĕтнĕ, март уйăхĕнче вара çак хуçалăхăн Янăшри ферминчен 11 пин тенкĕлĕх пурлăх илсе кайнă – кукăр алăллă çынсен явап тытмах тивет.

Районти шалти ĕçсен пайĕ.

Ашшĕлĕхне палăртасси

## ХĔРНЕ ЙЫШĂНМАСТЬ

***Вăл çынпа ан çыхлан тесе мăнукăма çĕр хут та асăрхаттартăм пуль. Çук, итлесшĕн мар çамрăксем. «Тăван макăра-макăра калать – тăнламастпăр, çич ют кула-кула калать – итлетпĕр» тенĕ пек пулса тухнине халь ăнланчĕ те, анчах чавса çывăх та – çыртма çук.***

***18-ти мăнукăм вăтăрти арçынпа ача çуратрĕ. «Юрататăп» тесе çӳренĕ хайхи-майхи арçын халь яхăнне те ямасть. «Ман ача мар вăл», – тет хăйĕн хĕрĕ пирки. Ашшĕ пулнине çав çынна мĕнле йышăнтармалла-ши?***

Т.ТОЛСТОВА.

Кăмăлпа йышăнмасан суд урлă çеç çирĕплетсе пама тивĕ. Ашшĕ пулнине çирĕплетсе пама суда ачан ашшĕ хăйĕн тĕпренчĕкĕ патне çырнă çырусене, открыткăсене, пĕрле ӳкернĕ фото ӳкерчĕксене тата ытти те тăратма пулать. Вĕсем пĕрле пурăннине пĕлекен çынсене те свидетель пулса суда чĕнтерме пулать. Кун пирки тавăçрах кăтартмалла. Çакăн йышши самантсемпе çирĕплетсе пама май килмесен генетика (ДНК) анализĕ тутармалла. Ку вăл йӳнĕ мар та, анчах çине тăрас тесен тăкакланмах тивĕ.

Хурава В.ЭВЕРККИ ширанă.

## ПУР ПĔР ÇАКЛАНЧĔ

Милицин Тутаркасси участокĕнчи уполномоченнăйĕсем Г.Орловпа П.Петров Çĕнĕ Тутаркассинчи Л.Романова сăмакун туса сутнине пĕлсех тăнă, кăçалхи январьте вара ăна Уголовнăй кодексăн 238-мĕш статйинче пăхнă преступлени тунăшăн – этем пурнăçĕпе сывлăхне хăрушлăха кĕртсе ӳкерме пултаракан спирт хутăшĕ сутнăшăн – тытса чарнă. Майăн 12-мĕшĕнче суд Л.Романована çакăншăн 4 пин тенкĕлĕх штраф тӳлеттерме йышăнчĕ.

А.ИВАНОВ.

Страницăна Ю.МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.

Кĕçех уçăлать

# КУ ТА «ЛУКОШКО», ВĂЛ ТА «ЛУКОШКО»...



Çак ятпа пĕлтĕрхи декабрьте Шупашкарти Гагарин урамĕнчи 34-мĕш çуртра пĕрремĕш магазин уçăлнă, халĕ вара ун пек ятли 5 ĕçлет. Вĕсенче сутакан тĕрлĕ тавар супермаркетри пекех: мĕн туянас тетĕн – пурте пур, килте усă курмалли хими препарачĕсем таранах. Çынсене «Лукошко» магазинсене туртаканннни вăл – вĕсенче сутакан тавар хулари ытти лавккасенчи хакран йӳнĕрех пулни. «Тăван Ен» хаçат корреспонденчĕ кун пирки Шупашкарти Мир проспектĕнче пурăнакан З.П.Трофимова шухăшне ыйтса пĕлнĕ. Акă мĕнле хуравланă Зинаида Петровна: «Тип çу паян «Лукошкăра» икĕ савăтах туянтăм-ха: кунта вăл 4 тенкĕ йӳнĕрех те. Сĕт те пĕр тенкĕ йӳнĕрех. Çапла пенси укçине куллен перекетлетĕп ав...»

«Йӳнĕрех сутакансем Кӳкеçре те пулсан лайăхчĕ те!» – тетĕр-и? Çывăх вăхăтрах пулаççĕ. Часах акă Кӳкеçри Советски урамĕнчи 74-мĕш çуртра суту-илӳ залне карçинккăпа кĕрсе апат-çимĕç суйласа тухма май туса паракан «Лукошко» ятлă магазин уçăлать. Вăл хăш кун тата миçе сехетре ĕçлесе каяссине район хаçатĕнче тĕплĕнрех пĕлтерĕпĕр.

Маларах магазина тытса тăракансем çакна пĕлтереççĕ: «Лукошкăра» ĕçлеме сутуçăсемпе кассирсем кирлĕ пулаççĕ, вĕсен уйăхри ĕç укçи – 7,5-шер пин, фасовщицăсемпе уборщицăсен – 5-шер пин, грузчиксен 9-шар пин тенкĕ таран. Паллах, ĕçре пуян опыт пухнисене магазина чи малтан илетпĕр, ĕçе пĕлменнисене суту-илӳ мелĕсене тӳлевсĕрех вĕрентетпĕр. Ку ыйтупа Советски урамри 74-мĕш çуртри «Лукошко» магазина пымалла.

**Шупашкар районĕн хисеплĕ çыннисем!**

***ÇЫВĂХ КУНСЕНЧЕХ КӲКЕÇРЕ «ЛУКОШКО» МАГАЗИН ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАТЬ, УНĂН АЛĂКĔСЕМ ЯРИ УÇĂЛСА КАЙСАНАХ СИРЕ УНТА ХАПĂЛ ТУСАХ КĔТЕТПĔР.***

## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**Комиссия по проведению аукциона** по продаже недвижимого муниципального имущества, созданная распоряжением главы Шинерпосинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики от 31.03.2008 г. № 8-Р, освещает результаты аукциона, проведенного 23.05.2008 г.

| № лота | Наименование | Кол-во участников | Цена сделки (руб.) | Победитель аукциона |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Здание дома культуры, 1957г, д.Шинерпоси, ул.Кооперативная, д.7, 367,7 кв.м. | 2 | 190850 руб. 00 коп. | гр.Алексеев Георгий Юрьевич |

По лотам № 2,3 признать аукцион несостоявшимся в связи с отсутствием заявок.

*Председатель комиссии.*

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией, обслуживанием.**
***Т.: 8 905 345 77 19.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1563 га с кадастровым номером 21:21:300101:162, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Анаткас-Туруново, ул.Совхозная (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для ведения ЛПХ без права возведения на нем зданий и строений. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

***Реализуем кольца колодцев ж/б D-0,7м; D-1,0м; D-1,5м; крышки, днища к ним, услуги манипулятора, доставка.***
***Тел.: 67-82-52.***

**Предполагается** предоставление в аренду на 11 месяцев земельного участка площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:16 01 20:0117, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п.Кугеси, новый западный микрорайон (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, админис-трация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду на 11 месяцев земельного участка площадью 0,0346 га с кадастровым номером 21:21:150102:88, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Лапсары, ул.Луговая (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 10 от 30.01.08 г. в объявлении о продлении срока аренды земельного участка вместо «21:21:07 01 01:0075» следует читать «21:21:17 01 01:0075» и далее по тексту.

**Собственники** земельных долей колхоза «1-ое Мая» Чебоксарского района ЧР Никитин В.У., Григорьева Г.Е., Седов В.И., Григорьев Н.Г., Кузнецов Б.П. сообщают о своем намерении выделиться из земель с/х назначения в счет долей по 2,85 га, в том числе 2,56 га пашни на севооборотах в поле №2С (бывший садовый участок).

Свои возражения направить в месячный срок со дня публикации объявления по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

***В актовом зале военкомата***
**28 мая 2008 г.**
***состоится праздничное мероприятие ко Дню пограничника.***
***В программе:***

**1. Поздравления с праздником.**
**2. Концертная программа.**

***Начало в 16 часов.***

***Чупнă хура тынашка сутатăп.***
***Тел.: 2-34-62.***

**ОАО «ЧУВАШСКИЙ БРОЙЛЕР»**
***срочно требуется на работу:***
***Грузчики***
***Рабочие сектора убоя и переработки*** (мужчины и женщины)
***Мойщики, дезинфекторы*** (мужчины)
***Водители***
***Сантехники***
***Зоотехник***
***Машинисты аммиачно-холодильных установок***
***Газооператор на сезонную работу***
***Рабочие на сезонную работу.***
Перевозка людей Чебоксары – фабрика, п.Кугеси – фабрика, Атлашево – фабрика на служебных автобусах.
***Заработная плата выдается своевременно, два раза в месяц.***
***Адрес: Чебоксарский район, д.Шинерпоси.***

**На основании распоряжения** главы Чебоксарского района от 26.05.2008 года № 100-р администрацией Чебоксарского района проводится открытый аукцион по продаже земельных участков, который состоится 02 июля 2008 года в 10.00 часов в зале заседаний администрации Чебоксарского района по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.***

Организатором торгов выступает управление экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района.

На аукцион выставлены следующие земельные участки:

участок № 1 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:88 (лот № 1),
участок № 2 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:87 (лот № 2),
участок № 3 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:80 (лот № 3),
участок № 4 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:81 (лот № 4),
участок № 5 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:75 (лот № 5),
участок № 6 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:70 (лот № 6),
участок № 7 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:73 (лот № 7),
участок № 8 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:76 (лот № 8),
участок № 9 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:77 (лот № 9),
участок № 10 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:85 (лот № 10),
участок № 11 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:67 (лот № 11),
участок № 12 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:86 (лот № 12),
участок № 13 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:74 (лот № 13),
участок № 14 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:72 (лот № 14),
участок № 15 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:69 (лот № 15),
участок № 16 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:71 (лот № 16),
участок № 17 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:79 (лот № 17),
участок № 18 площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:160135:78 (лот № 18).

Местоположение земельных участков: ***Чувашская Республика, Чебоксарский район, юго-западная окраина п.Кугеси.***

Целевое назначение: индивидуальное жилищное строительство.

Обременения отсутствуют.

Начальная цена земельных участков – 313 500 рублей.

Сумма задатка – 62 700 рублей.

Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.

Шаг аукциона – 5% от начальной цены земельного участка.

Для участия в аукционе претенденты должны представить в срок по 26 июня 2008 года следующие документы: заявку; платежный документ, подтверждающий внесение задатка; физические лица предъявляют копию документа, удостоверяющего личность.

Организатор торгов имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 3 дня до его проведения.

Определение участников торгов состоится 01 июля 2008 года в администрации Чебоксарского района (кабинет № 2) в 10.00 часов.

Осмотр земельных участков на местности осуществляется в следующем порядке: место сбора для выезда на место – п.Кугеси, ул.Шоршелская, д.1 (администрация Кугесьского сельского поселения) 10 июня 2008 года в 10-00 часов, осмотр земельных участков производится визуально на местности с участием специалистов администрации Кугесьского сельского поселения.

Задаток перечисляется на счет: ИНН 2116815609 КПП 211601001 Финансовый отдел администрации Чебоксарского района Чувашской Республики (Администрация Чебоксарского района Чувашской Республики л/с 05903160015) Чебоксарское ОСБ 4472 п.Кугеси р/с 40302810875230100003 в Чувашском ОСБ 8613 г.Чебоксары БИК 049706609 к/с 30101810300000000609.

Победителем аукциона признается участник торгов, предложивший наибольшую цену земельного участка.

Внесенный победителем торгов задаток засчитывается в оплату приобретаемого в собственность земельного участка.

Договор купли-продажи земельного участка подлежит заключению в срок не позднее 5 дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

Покупатель производит оплату земельного участка единовременно в течение 5 дней со дня подписания договора купли-продажи земельного участка.

Оплата расходов за публикацию информационного сообщения о проведении торгов по продаже земельных участков и о его результатах производится победителем аукциона.

Прием заявок, оформление документов для участия в аукционе, ознакомление с проектом договора купли-продажи земельного участка, основанными на результатах инженерных изысканий параметрами разрешенного использования объекта капитального строительства, с техническими условиями подключения такого объекта к сетям инженерно-технического обеспечения, а также с платой за подключение осуществляются с 28 мая 2008 года по 26 июня 2008 года до 17 часов в управлении экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района по адресу: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, каб.№20.***

***Телефон для справок: 8(83540) 2-15-92.***

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 31 от 19.03.08 г. в объявлении о выделении земельной доли Падюкову В.В., Падюковой Е.И. вместо «4,30 га» следует читать «4,18 га» и далее по тексту.

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» №№ 116-117 от 13.10.07 г. в объявлении о выделении земельной доли Данилова З.В., Андриянова С.А., Димитриева В.А. и др. вместо «Димитриевой В.А.» следует читать «Седов В.И.» и далее по тексту.

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 52 от 14.05.08 г. в объявлении о выделении земельной доли Смирновой Г.М. вместо «поле №3 первого почвозащитного севооборота рабочего участка №1 восточнее от д.Ойкасы» следует читать «поле №5 третьего полевого севооборота рабочего участка №1 западнее с.Анат-Киняры» и далее по тексту.

✵ ✵ ✵

«Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕ кунта ĕçлекен Ирина Геннадьевна Федорован мăшăрĕ, Надежда Семеновна Лебедеван шăллĕ, Владимир Прокопьевич Лебедевăн мăшăрĕн шăллĕ

**Михаил Семенович ФЕДОРОВ**

вăхăтсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю – по средам и субботам.

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Учредители: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор – 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни – 2-21-88, бухгалтерия – 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 27.05.2008 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 2530. Заказ № Индекс газеты - 54820.